К 84.09(=Чув)
Ю41
Ч-47005

Анатолий ЮМАН
Юрий КУДАКОВ



# Виçĕ юрă

Национальная библиотека ЧР
4-047005

Кур К84.09(=Чув) Ю41

**Юрий КУДАКОВ,**
***Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ, Чăваш музыка обществин тава тивĕçлĕ деятелĕ.***

**Анатолий ЮМАН,**
***СССР тата РФ писательсен союзĕн членĕ, Раççей культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.***

**Геннадий ЭСЕКЕЛ (Никифоров),**
***Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, «Сăпка юррине» чи малтан юрланă юрă ăсти.***

# Виçĕ юрă

Ульяновск,
2014

ББК (Чув.)
Ю-41

Дарственный экз.

**Юман А.**

**Ю 41** **“Виçĕ юрă”.** Юрăсем. – Ульяновск, 2014. – 32 с.

Кĕнеке Ю.Кудаков паллă композитор А.Юман сăввисем тăрăх çырнă юрăсемпе паллаштарать. Ăна чи малтан юрланă Г.Никифоров юрăçăн пултарулăхĕ çинчен те вуласа пĕлме пулать.

И-47005

Национальная библиотека
Чувашской Республики

© А.Юман, Ульяновск-2014
© “Канаш” хаçат çумĕнче кăларнă (В.А.Ефимова), 2014



**Виçĕ тус-юлташ.**
*Сулахайран сылтăмалла:* **Ю.Кудаков, А.Юман, Г.Эсекел (Никифоров).**

*Эсĕ — Чĕмпĕрĕн юманĕ,*
*Чĕмпĕрьен чăвашлăхне*
*Пултăн тулăх упраканĕ,*
*Сӳнтермерĕн вучахне.*

*Тавтапуç та тайма пуçăм,*
*Паттăр чунлă ыр чăваш!*
*Тымару ан хăртăр, тусăм,*
*Çамрăк пек çӳре вăш-ваш.*

**Геннадий ЮМАРТ.**



Тăван халăха юратса
юрăсем эпĕ хыврăм.

Ю. Кудаков

# Халăхран тухнă талант

Çыртăм та çак сăмахсене шута кайрăм: чăвашсен музыка тĕнчинчи ятлă-сумлă ăста – Юрий Дмитриевич Кудаков пултарулăхне тĕрĕс палăртаççĕ-ши вĕсем? Эппин, унăн кун-çулне сирĕнпе пĕрле йĕркелесе тухарха. Хыçа юлни яланах курăнарах парать.

**Ача чухнехи.** Юрий Кудаков композитор, баянист тата педагог Çĕмĕрле районĕнчи Хутар ялĕнче пысăк çемьере (пурĕ тăхăр ача пулнă Кудаковсен) çуралса ӳснĕ. Юра кил-йышри пиллĕкмĕш ача пулнă. Вăхăчĕ синкерлĕ: Тăван çĕршывăн аслă вăрçи иккĕмĕш çул кĕрленĕ (Юра 1942 çулта кун çути курнă). Унăн ашшĕ, Дмитрий Васильевич, вăрçăччен ялти хресченĕн çăмăл мар ĕçĕсене тунипе пĕрлех çăкăр пĕçерме пултарнă, ялти пекарньăра тăрăшнă. Вăйă-юрă картинче ăна ялта çитекенни пулман. Вăрман касма кайсан, утă çине тухсан та, каннă вăхăтра та яш-кĕрĕме самантрах вăйă картине тăма хавхалантарнă, юрă пуçарса яраканĕ те хăех пулнă. Туй-çуй çĕкленсен туй пуçĕ пулса тăнă, каччăсене «саккăрла» е «вун иккĕлле» çаптарса ташлаттарнă.

Пулас композиторăн амăшĕ Варвара Фёдоровна та упăшкинчен юлсах кайман, ăна ĕçре те, вăйă картинче те пулăшнă. «Чипер Варвари» тенĕ ăна ялта. Кудаковсен йышлă çемйинчен икĕ композитор тата музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ тухма пултарнă. Кунта Юрий Дмитриевичăн Мĕтри шăллĕпе Раиса йăмăкĕ çинчен сăмах пырать.

Дмитрий (Мĕтри) Кудаков (1955 çулта çуралнă) композитор, баянист-концертмейстер, педагог пулнă. Канашри педагогика институтĕнче музыка пĕлĕвне илнĕ. Ялти Культура çуртĕнчи пултарулăх ушкăнне, кайран Çĕнĕ Шупашкарти «Кăмăл» ятлă хĕрсен юрă ансамбльне

вунă çул ытла ертсе пынă. Вăл аллă ытла юрă авторĕ. Чĕмпĕр енче уйрăмах унăн «Пĕррехинче çурхи лăпкă каç» юрри анлăн сарăлнă. Шел пулин те, пултаруллă композитор 2002 çулта вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Раиса вара, 1952 çулта çуралнăскер, Çĕрпӳри профтехучилищĕре вĕренсе пĕлу илнĕ, Хутарти Культура çурчĕн директорĕ пулнă, унти халăх театрне тата фольклор ансамбльне ертсе пынă, «Музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Ялти хуткупăс ăстисем хушшинче уйрăмах Тимĕрç Кольки хайĕн ăсталăхĕпе палăрнă. Пĕчĕк Юра вăл калакан кĕвĕсене итлеме юратнă. Çаплах хăйпе тантăшлă Уçăп Петтипе туслашнă — унăн пиччĕшĕ вербовкăпа кайсан хуткупăс туянса таврăннă.

— Пар-ха, эпĕ те каласа пăхам, — аптратнă вăл килçурт умĕнчи пĕрене çинче купăс янраттарса ларакан вăйăçа. — Пирус илсе кил, вара паратăп, — хуравланă лешĕ. Юра хавасланса пирус илме чупнă. Таврăнсан вăйăçă ăна, чăнах та, хуткупас тыттарнă.

Çав вăхăтра Юрăн аслă пиччĕшĕ, Валентин, Мускав çывăхĕнче çар хĕсметĕнче тăнă. Яла курма таврăнсан вăл шăллĕне хуткупăс парнелесе савăнтарать. Çакăн хыççăн Юра купăсне аллинчен пач яман темелле: пушă вăхăтра — каçхи вăйăра е улахра — янраттарнă кăна! Пыра-киле туй халăхне те ташлаттарма пултарнă, салтак ачисене ăсатма та чĕннĕ ăна. Паллах, шкулти концертсем те унсăр иртмен.

**Ялкор — «хăрушă чир».** Шкулта пултаруллă учительсем ĕçленĕ. Вĕсенчен пĕри — вырăс чĕлхи учителĕ Антон Хрисанфович Таньков. Çамрăк чухне Антон Хрисанфович сăвăсемпе калавсем çырнă. Унăн «Тăман» ятлă калавĕ пысăк пичетре те тухнă пулнă. Çавăнпа вăл чăваш писателĕсене самаях çывăх пĕлнĕ. Çав учитель

витĕмĕпе улттăмĕш класра вĕренекен Юра та районта икĕ чĕлхепе тухса тăнă «Социализмла ĕç» хаçата пĕчĕк заметка çырса янă.

Хаçатри заметка геройĕсем пекех пĕчĕк Юра хăй те хуçалăх ĕçне хастар хутшăннă. Çуллахи кану кунĕсенче хур кĕтнĕ, лашапа кĕлте турттарнă, çум çумланă — сахал-и ялти ача-пăча валли ал çемми ĕç!

Çакăнтан пуçланнă та «хаçат чирĕ». Юра хыççăн класри нумай ача район хаçатне çырса тăма пуçланă. Вĕсенчен чи хастарри — Юрий Кудаков — республикăри ялкорсен съездне те кайма тивĕç пулнă.

«Хаçат редакторĕ Пётр Игнатьевич Мигушов мана редакцие пырсан кашнинчех вуншар тенкĕ укçа тыттарса яратчĕ», — аса илет Юрий Дмитриевич.

Ку вăл çамрăк ялкорăн гонорарĕ пулнă ĕнтĕ. Пурнăçри тӳнтер енсене те питлеме хăраса тăман вăл. Хăш-пĕр йăх-яхсем ăна куншăн хăраткалани те пулнă. Çавăнпа ку е вăл йĕксĕке тăрă шыв çине кăларса çырнă чух ирĕксĕрех псевдонимпа усă курма тивнĕ. Çавнашкал вăрттăн ятсем темиçе пулнă çамрăк ялкорăн: «Ю.Хутарсем», «К.Кураков», «К.Дмитриев», «К.Юрьев», «Юрий Ильгужарский», «Бивень» т.ыт.те.

Хаçата çырнипе çырлахман Хутар ачисем. В.Г.Толстов-Атнарский учитель ертсе пынипе вĕсем çут çанталăк çинчен алăпа çырнă журнал кăларса тăнă. Уйрăмах шкулта Сталин ссылкинчен таврăннă чăвашсен паллă поэчĕ Виктор Рзай ĕçлеме пуçласан çамрăк талантсем йышлăн хунама пуçлаççĕ. Виктор Ефремович тăван чĕлхепе литературине вĕрентнĕ. Пĕр çул çеç ĕçленĕ вăл кунта, анчах çак хушăра литература кружокĕ йĕркелеме ĕлкĕрнĕ. Чăваш университетĕнчи культура кафедрин ертӳçи, паллă тепчевçĕ Георгий Федоров профессор тата вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Николай Хутар поэт

ячĕсене асăнчĕ Юрий Дмитриевич. Вĕсем литературăри малтанхи утăмесене шăпах В.Рзай кружокĕнче тунă-мĕн.

**Кĕвĕ-çемĕ тĕнчинче.** Çавах та музыка илемĕ Юрий Кудакова хăй тĕнчине илĕртсе кĕрет. 1959 çулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Юрий Канашри педагогика училищине вĕренме кĕме экзамен тытать. Комисси членĕсем унăн пултарулăхне тĕрĕслесе пăхаççĕ, пĕр сăмахсăрах музыка уйрăмне вĕренме йышăнаççĕ. Кунтан вăл 1962 çулта вĕренсе тухать. Ăна, чи лайăх вĕренекене, çав педучилищĕнех баянпа калакансене хатĕрлеме хăвараççĕ.

1963-1967 çулсенче Юрий Дмитриевич Хусанти пединститутăн музыкăпа педагогика факультетĕнче хăйĕн ăсталăхне малалла ӳстерет. Хусан хыççăн Шупашкара çул уçăлать. 1967 çулта Юрий Кудаков Чăваш педагогика университечĕн музыка инструменчĕсен кафедринче ĕçлет. 1998 çулта вăл педагогика енĕпе диссертаци çырса хӳтĕлет. Хайĕн ĕçĕнче шкул ачисене культурăна хăнăхтарнă чухне халăх юррисемпе усă курмалли мелсене палăртать.

Ю.Д.Кудаков чăвашсен паллă композиторĕсемпе искусство çыннисем çинчен «Советская музыка» журналпа вырăнти хаçат-журналта тĕрлĕ çулсенче статья нумай пичетленĕ. Вĕсенче вăл А.Орлов-Шуçăм, А.Асламас, А.Токарев, Г.Хирбю, Г.Лебедев, Ф.Лукин композиторсен, Т.Гурьева, З.Лисицына, И.Христофоров, Н.Виноградов, Г.Никифоров юрăçсен, çавăн пекех тĕрлĕ инструментпа калакан А.Чернов, П.Васильев, Б.Манко, А.Васильев, А.Возяков, А.Миронова, Х.Ильинская артистсен пурнăçĕпе пултарулăхне тишкерсе тивĕçлĕ хак панă.

Çамрăк ăрăва музыка тĕнчипе паллаштарас енĕпе

ӗлӗкрех пирӗн ентеш — Григорий Лисков композитор пысӑк вӑй хуратчӗ, халӗ ҫӗнӗ ӗмӗрти музыка ӑсти унӑн ӗҫне малалла шанчӑклӑн тӑсать.

Музыка произведенийӗсем ҫырас ӗҫе Юрий Дмитриевич 1960 ҫулта пуҫӑннӑ. Ку тарана ҫитсе унӑн юрӑ кӗнекисем темиҫе тухнӑ. Ҫав шутра: «Юрлас килет» (1982), «Салам, ҫӗнӗ кун!» (1989), «Мӗнле-ха чӑтӗ юрламасӑр чун?» (1997), «Тилли юррисем» (П.Хусанкай сӑввисем тӑрӑх, 2001), «Акатуйра» (2002), «Песня — друг школьника» (2002), «Икӗ пин ҫурта ҫутса ярар-и?», «Юрату чечекӗ» (2006), «Ах, мӗн-ма-ши?..» (2007), «Сан яту ман юрӑра» (2007) т.ыт.те.

Ю.Кудаков чӑваш театрӗсем лартнӑ нумай-нумай спектакль валли ҫырнӑ кӗвӗсен авторӗ. Вӑл ултҫӗр ытла юрӑ ҫырнӑ. Вӗсенчен чылайӑшӗ халӑхра анлӑн сарӑлнӑ. Композиторӑн икҫӗр ытла произведенине Чӑвашрадио фончӗ валли ҫырса илнӗ.

Ю.Кудаков кӗвӗленӗ юрӑсем чӑваш халӑх пултарулӑхне ҫывӑх, ҫав вӑхӑтрах вӗсенче ку чухнехи саманана палӑртакан ҫемӗсем те илтӗнеҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсене ваттисем те, ҫамрӑксем те кӑмӑлласа йышанаҫҫӗ. Тӗслӗхшӗн ҫак юрӑсене асӑнас килет: «Хурлӑхан» (сӑвви А.Воробьевӑн), «Кӑвак чечексем» (сӑвви А.Галкинаӑн), «Савни, савниҫӗм, сан пӗлесчӗ» (сӑвви Г.Чаржовӑн), «Пире тӑван кӗтсе тӑрать» (сӑвви И.Давыдов-Анатрин), «Ҫулҫӑ тӑкӑнать», «Юрату сӳнмест чӗрере» (сӑввисем Юхма Мишшин), «Ӑҫта пултӑн халиччен» (сӑвви А.Чебановӑн) т.ыт.те. Пысӑк жанрлӑ произведенисем: «Ялти уявра» (сӑввисем Р.Сарпин), «Акатуйра» (сӑввисем С.Ильинӑн) хорпа юрламалли сюитӑсем, «Туя туй пек тӑвар-и!..» (сӑввисем В.Давыдов-Анатрипе Н.Симуновӑн) юрӑллӑ-ташӑллӑ сиюта, «Икӗ пин ҫурта ҫутар-и?..» капелла хорӗн

триптихĕ (сăввисем А.Дмитриевăн), В.Ахун, Р.Агеева, П.Хусанкай сăввисемпе çырнă ярăмсем, баянпа калама çырнă хĕрĕх ытла пьеса, ача-пăча юррисем.

Чăваш музыка культурине аталантарас ĕçри çитĕнӳсемшĕн Ю.Кудаков композитора «Чăваш Республика культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» (1980), «Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ» (1985), «Чăваш музыка обществин тава тивĕçлĕ деятелĕ» (1995) ятсене парса чысланă.

«Çĕр пин юрă çĕршывĕ» тетпĕр эпир тăван Чăваш Ене. Анчах чăваш тĕнчи республика чиккипе çеç çырлахмасть. Аслă Раççей талккишĕпех сапаланса пĕтнĕ эпир, чăвашсем. Пире пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тăраканĕ вăл — И.Я.Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче чĕртсе хăварнă çырулăхпа культура вучахĕ. Пирĕн ятлă-сумлă культура ĕçченĕсем тулай чăвашĕсемпе яланах тачă çыхăну тытса ĕçлеме тăрăшаççĕ. Çавнашкал çыхăнура тĕл пулса паллашнăччĕ те эпĕ Юрий Кудаков композиторпа. (Сăмах май каласан, чăвашсем йышлăн тĕпленсе пурăнакан вырăнсем хушшинче вăл çитсе курманни юлман та пулмалла.)

Ку тарана çитсе эпир унпа пĕрле 14 юрă çыртăмăр. Нумаях пулмасть вĕсене уйрăм кĕнекен кăларма май килчĕ. Ентешсем вĕсене юратсах юрлаççĕ.

— «Кудаков вăл Кудаковах», - тесе каланăччĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Иван Ахрат музыковед çав кĕнекене уçакан «Чăвашкасси юррине» Чăвашрадио фончĕ валли çырса илнĕ чухне. Çакă композиторăн хăйĕн уйрăм сасси пуррине пĕлтерчĕ пулас. Ахрата ĕненме пулать, вăл сăмахне çилпе вĕçертсе каламан.

Композитор пысăк ĕмĕтсемпе пурăнать. Вăл çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсемпе кĕвĕсем çырать, хăйĕн ăсталăхне çамрăксене вĕрентсе хăварма тăрăшать. Çыру сĕтелĕ çинче

çĕнĕ ĕç – «Шкул ачисен музыкăпа эстетика культурине калăпланă çĕрте музыка инструменчĕсемпе усă курасси». Ăна Юрий Дмитриевич учительсем валли хатĕрлесшĕн. Пирĕн вара ырми-канми тăрăшакан ăстана пултарулăхра çĕнĕ ăнăçусем тума сунасси кăна юлать.

**Анатолий ЮМАН,**
**писатель, РФ культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**



# Автор çинчен

Анатолий Юман (Анатолий Федорович Ермилов) Чăвашкасси ялĕнче (Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕ) 1932 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче учитель çемйинче çуралнă. Кивĕ Улхашри çичĕ çуллă, Вăта Тимĕрçенти вăтам шкулсенче вĕреннĕ. 1952 çултанпа районта тухса тăнă хаçатра ĕçленĕ. 1962 çулта Хусанти ВПШ çумĕнчи журналистсен ултă уйăхлă курсĕнчен вĕренсе тухнă. Вăл – Ульяновскра тăван чĕлхепе тухса тăракан «Канаш» хаçата йĕркелесе яраканĕсенчен пĕри. Хаçатра ĕçленĕ çулсенче обществăлла ĕçе активлă хутшăннă.
1983 çулта Чăвашкассинчи пуçламăш шкул директорĕпе пĕрле Раççейре малтанхи хут И.Я. Яковлев Кунне йĕркелесе янă. 1992 çулта çак юхăм Чăваш чĕлхи кунĕ статусне илнĕ.
А.Юман çаплах аллă ытла кĕнеке авторĕ. Унăн малтанхи сăвви районта тухса тăнă «Пĕрлешӳллĕ ĕç» хаçатра 1947 çулта пичетленнĕ. Вăл 1983 çулантпа СССР тата РФ писателĕсен союзĕн членĕ, Раççей культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, Петĕр Хусанкай тата Николай Абрамов ячĕллĕ литература премийĕсен тата Ульяновск облаçĕнчи журналистсен Мария Ульянова ячĕллĕ преми лауреачĕ.



*Ырăна ҫунат сарса ҫĕклентĕр*
*Ӳтарми асамлăх тĕнчине.*

*Генн. Эсекел*

## Кăмăл туртăмĕ — пултарулăхра

Тутарстан республикин Пăва районĕ кӳршĕ республикăри чăваш районĕсенчен чи палли. Кунта, Тăхăрьял тăрăхĕнче, 1990 çулта Н.Дедушкинăн 75 çулхи юбилейне иртерме чăваш литературин ĕçченĕсем К.Петров, Н.Симунов, Ф.Агивер, Энтип Вaççи, чăваш халăх артисткисем З.Лисицынăпа Т.Гурьева тата эпĕ те пулнăччĕ. Сакăр тĕлпулу ирттертĕмĕр ун чухне. 1994 çулта «Ялав» журнал редакцийĕнче ĕçлекенсемпе çыравçăсем Ю.Сементер, А.Дмитриев, К.Петров, В.Туркай, С.Асамат тата Ренат Харис поэтпа пĕрле килнĕ Тутарстан поэчĕсемпе искусство ĕçченĕсен ушкăнĕсем Туслăх кунĕсене хутшăнтăмăр. Пирĕнпе пĕрле кашнинчех Пăва районĕнчи Хирти Кушкăра çуралса ӳснĕ, халĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Геннадий Леонтьевич Никифоров (Эсекел) пулчĕ.

1943 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă Геннадий. Ашшĕ енчи тăванĕсем юрă-ташăпа питĕ туслă пулнă. Ашшĕ те, Леонтий Петрович, хуçалăхра ĕçченлĕхĕпе тата ăсталăхĕпе палăрнă — пăчкă-пуртăпа-и, кăмака купаласа-и, ытти тем тĕрлĕ ĕçре те. Хăнара вара юрласа савăнтарнă: уçă сасăллă тенора ватти-вĕтти те каçса кайсах итленĕ. Сĕрме купăсне те аларан яман — районĕпе чаплă музыкант шутланнă. Амăшĕ, Христина Семеновна, ĕçре çирĕп чунлă пулнă. Геннадий каланă тăрăх, акă мĕн паллă пулчĕ: вăл амăшĕ юрланине нихăçан та илтмен иккен.

«Питĕ юрлас килетчĕ. Чун туртăмне пурнăçа кĕртме, сцена çинчи ирĕклĕхе туйма пире пуçламăш классенче вĕрентекен Мария Петровна Сарафанова пулăшатчĕ, пирĕн шкулти çамрăксемшĕн вăл.ылтăнах пулнă пулĕ», — аса илет халĕ хайĕн çамрăклăхне Г.Никифоров.

1957 çулта, Мускаври Пĕтĕм тĕнче çамрăкĕсен фестивальне хатĕрленнĕ май, Буденнăй районĕн шкулĕсенче те конкурссем ирттернĕ. Мала тухнисене кĕçех Хусана, 79 районтан пуçтараннă çĕнтерӳçĕсен юлашки концертне чĕнсе илнĕ. Пĕччен юрлакансенчен Г.Никифоров «Плещут холодные волны» (урăхла ăна «Варяг» теççĕ), вырăсла юрласа (баянпа 12 çулти В.Афанасьев калană) пĕрремĕш вырăн йышăнать. Пирвайхи пысăк çĕнтерӳ, савăк кăмăл-туйăм!

Пултарулах пиçĕхĕвне Хирти Кушкă çамрăкĕсем вăйă карăтинче туптанă. Сăмах май, унăн аппăшĕ Наçтаççи, ашшĕ те, ашшĕн йăмăкĕ Маркка аппăшĕ те вăйăсенче пуçаруçăсем пулнă. Вĕсем ăста юрлама кăна мар, вăйăсен аталанăвне йĕркелеме те пултарнă. Геннадий ашшĕн пултарулăхне лайăх астăвать. Унпа мухтанать те. Çапла пулмасăр, ашшĕн ăсталăхне ăçтан манăн? Йышлă çемьере кăвас чĕресĕ пушă ларман тенĕрен, Геннадий ачаранах ашшĕ каланă сĕрме купăс сассипе ыйхăран вăраннă, пĕр сăмахпа, илемлĕ те çепĕç кĕвĕсен тĕнчинче ӳснĕ.

1958 çул. Тăхăрьял тăрăхне Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ гастроле килнĕ. Чăваш ялĕсем пулсассăн та вырăсланма пуçланă. Çавăн пек политика тытнă вăл вăхăтра партипе правительство: халăхсене вырăслатас тĕллев лартнă. Шкул ачисем тăван чĕлхепе вĕренесшĕн марччĕ. Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ килни, композиторсем кĕвĕленисем тата халăх юррисем нумайăшĕн куçĕсене çĕнĕрен уçса хăварнă. Ĕмĕр асăнмалăх пулнă Анна Казаковăпа Николай Комиссаров, Николай Петров юрланă юрăсем. Ансамбль ертӳçи А.Г.Орлов-Шуçăм композитор Геннадий юрланине итлесе пăхнă.

— Геннадий, халĕ санăн сасă ылмашăвĕн тапхăрĕ

пырать. Кун пек чухне юрламалла мар. Вăтам шкултан вĕренсе тухăн та Шупашкарти музыка училищине вĕренме пырăн, – тенĕ чăваш искусствин чаплă деятелĕ.

Ăраскалне кура Геннадий Леонтьевич профессиллĕ юрăç пулма вăтăр çултан каçсан кăна кӳлĕнет. Çак ӳсĕмшыравра нумайăшĕ ят та илме ĕлкĕрет, Никифоров вара... Ачаран вĕçерĕннĕ вăхăта, таçта тĕтрелĕхре илĕртекен ĕмĕтне хăваласа çитме пĕртте çăмăл пулман ăна.

Нумай чухне пурнăçра шутласа хунă пек пулмасть çав. Элшел вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухсан Геннадийĕн юрăç пулас ĕмĕчĕ часах татăлать. Шупашкар çинчен шутласси те çук: вĕсен çуртĕнче пушар тухать. Çунса каяççĕ. Çаванпа вăл çывăхри Пăва хулине çитсе ветеринари техникумне вĕренме кĕрет. Яла çӳреме инçе мар. Юр-вар килтен илсе килме майлăрах.

Техникумран вĕренсе тухсанах Геннадий Никифоров Каунаспа Рязань хулисенче хĕсметре пулать. Çарта та вăл юрăсăр пурăнаймасть, концертсемпе смотрсене тăтăшах хутшăнать.

Совет Çарĕнчен таврăнсан Геннадий пĕр тăхтамасăр Чăваш çĕрне, Шупашкара çул тытать. 1967 çулхи кĕркунне ăна Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамбльне хор артисчĕ пулма илеççĕ. Тепĕр çуркуннех Шупашкар музыка училищине вĕренме кĕме пикенет. Çук иккен! Мехелĕ ку хутĕнче çитеймест унăн. Ансамбль ертӳçи теноросемсĕр юласран хăраса Геннадий çинчен комисси членĕсене систерсе те хунă иккен! Ăна вĕренме илмеççĕ.

Г.Никифоров Чăваш патшалăх музыка театрĕн (халĕ оперăпа балет театрĕ) хорне ĕçлеме куçать. Ăна кунта А.Фишер хормейстер кăмăлласа йышăнать. Театрта сумлă юрăçсем ĕçленĕ, вĕсенчен вĕренмелли

И-4005
...циональная библиотека
...вашской Республики

пайтах çамрăкшăн: Зоя Андреева, Петр Заломнов, Александр Александров, Анатолий Канюка тата ытти юрăçа республикăра кăна мар, ун тулашĕнче те лайăх пĕлнĕ. Ун телейне, шăпах çак театрта Герта Карловна Варламова юрăç-педагог ĕçленĕ. Сăмах май çакна каласа хăвармалла: Герта Карловнăпа мăшăрĕ Владимир Иванович Варламов Шупашкара 1939 çулта килеççĕ. Варламовсем иккĕшĕ те Одесса консерваторине пĕтерсен Китая, Японие кайса ĕçлеççĕ. Каялла таврăнсан вĕсем Мускаври Пысăк театра ĕçлеме кĕме тĕрĕсленеççĕ. Вĕсене илеççĕ. Анчах çамрăк мăшăр ют çĕршывсем тăрăх гастрольте çӳренине пĕлсенех — каялла тăваççĕ. Иван Васильев юрăç (ун чухне вăл филармони директорĕ пулса ĕçленĕ) вĕсене Мускав филармонийĕнче тĕл пулса Шупашкара килме ыйтать. Шупашкарта чаплă юрăçсем чăваш юрăçисене мĕнле тĕрĕс мелмеслетпе юрламаллине вĕрентеççĕ. Анчах ăраскал урăхла пулса тухать. Вĕсем иккĕшĕ те шелсĕр репресси капкăнне çакланаççĕ. Герта Карловнăна Красноярск крайне ярса 25 çул тĕрмере хытă асаплантараççĕ, мăшăрне Улатăр тĕрминче милици хурахĕсем вилмелле хĕнесе пурнăçне татаççĕ.

Герта Карловна 1964 çулта çеç асапран хăтăлать. Пурăнма ниçта та мар, Шупашкарах таврăнать. Музыка театрĕнчи юрăçсене вокал искусствине вĕрентет. Г.Никифоров 1970 çулта ун патне лекет, чаплă педагог-юрăç патĕнче тăватă çул хушши вĕренет. «Хĕру чĕре нихçан та çынна усал тумасть» — çамрăкăн чунĕнче чăн-чăн ăста çыннăн урокĕсем ĕмĕрлĕхех асра юлĕç. «Ырă сăмах тимĕр хапхана уçтарĕ», — тет халăхăн тепĕр каларăшĕ. Харсăр çамрăка юрă искусствин хапхине уçма пулăшаканĕ шăпах Герта Карловна ĕнтĕ.

1974 çул. Г.Никифоров каллех Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищине вĕренме кĕрес ĕмĕтлĕ. Хусан

консерваторийĕн аспирантуринчен вĕренсе тухнă С.А.Кондратьев педагог çамрăк юрăçăн сассине тишкерет. Комисси членĕсемпе канашланă хыççăн (М.Денисовпа И.Калентьев юрăççем пĕрремĕш хут вĕренме кĕрес тесе пырсан пăрахăçлакансем) ăна тӳрех иккĕмĕш курса вĕренме илеççĕ. Çапла вара Геннадий Леонтьевич тăватă çул программине виçĕ çул хушшинче пурнăçлать. Хусан консерваторийĕн преподавателĕ Басовский Генăна Хусана пыма чĕнет, вĕренĕве малалла тăсма, аслă пĕлӳ илме хистет. Анчах Геннадийĕн экзамен тытнă вăхăтра иккĕмĕш ывăл çуралать. Юратнă çемйине пăрахса хăварма хал çитереймест вăл.

Училищĕре вĕреннĕ çулсенче пĕр татăлмасăр музыка театрĕнче ĕçлекенскер, диплом илсен те унтах юлать Геннадий. Юрăçа пысăк рольсемех пама пуçлаççĕ. Франци композиторĕн Г.Планкетăн «Корневильские колокола» опереттинче Гренише рольне шанса параççĕ. Пысăк ăсталăхпа юрлать вăл. Г.Максимовăн «Энĕш хĕрринче» музкомедийĕнче — Сергей, «Элпуçĕнчи Нарспи» музкомедире — Сантăр, А.Орлов-Шуçăмăн «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан» опереттинче — Çӳлли, Лутри, А.Асламасăн «Шуршăл тăхлачи» опереттинче Андриян Николаев сăнарĕпе тухать сцена çине.

Çав çулсенчех Чăвашрадио фонотеки те Г.Никифоров юрланă юрăсемпе пуянланать. Пурĕ вăл сакăрвунă произведение яхăн магнитофон хăйăвĕ çине çырнă. Вĕсен хушшинче Г.Хирбю, Ф.Лукин, Ф.Васильев, Ю.Кудаков композиторсен юррисемпе романсĕсем.

Г.Хирбю композиторăн «Нарспи» оперĕнчи «Алран кайми» кĕреке юрри, «Тухать-и те, тухмасть-и» туй юрри культурăн ылтăн фондне кĕрсе юлнă.

Г.Никифорова 1990 çулта «Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ» хисеплĕ ят параççĕ. «ЧР музыка

обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятпа та чысланă ăна.

Геннадий Леонтьевич литературăра та паллă. «Тантăшра», «Ялавра», «Çилçунатра», «Тăван Атăлта» чылай хайлавĕ кун çути курчĕ.

Петĕр Çăлкуç çырнăччĕ: «Талантлă çын пур енĕпе те талантлă. Çак чăнлăха пурнăçра пĕрре мар курса ĕненетĕн. Геннадий Леонтьевич пирки калас пулсан, унăн пултарулăхĕ икĕ çунатлă: вăл – опера юрăçи тата илемлĕ сăмах ăсти. Калавпа юмах та, сăвăпа пьеса та, повесть те çырать, юрă-кĕвĕпе те савăнтарать».

Геннадий Никифоров – республикăри Композиторсен ассоциацийĕн юрăçсен секцийĕн членĕ. Юлашки вуникĕ çулта çак коллектив чăваш композиторĕсен пултарулăхне пропагандăлас енĕпе чылай ĕç туса ирттерчĕ. Композиторсем Г.Никифоров юрăç сăввисемпе нумай юрă-кĕвĕ хыврĕç: Ю.Кудаков – «Тăван халăх», «Тăван енĕм – чăваш енĕм», «Ан васка, терĕн», «Ĕмĕтри савнине», «Эскетенĕм, Эскетен», «Чăваш çăкăрĕ», А.Никитин – «Шурăмпуçĕ таш ташларĕ», В.Адюков – «Савни, савни», «Ай, люккинам», «Вăрçа ылханса», «Ан ман мана». Г.Никифоров сăввисемпе çырнă юрăсем Елена Османова репертуарĕнче те пур («Шупашкарăм Шупашкар»), Иван Христофоров вара «Иртсе кайнă юрату» юррине чуна илĕртмелле шăрантарать.

Геннадий Леонтьевич тунă ĕçпе лăпланса ларакан çын мар. Литература хайлавĕсем «Геннадий Эсекел» хушма ятпа пичетленеççĕ. Пичетре пулман алырăвĕсен хушшинче «Тăхăрьялта» тата «Шыв хуçи» балет валли хатĕрленĕ либреттăсем, «Сурпан тĕрри» ятлă пьеса-оперетта. Çĕнĕ ĕмĕре Г.Никифоров-Эсекел юрăç-çыравçă пысăк тĕллевсемпе, хавхалануллă ĕмĕтсемпе кĕчĕ.

**Юрий КУДАКОВ, композитор.**

# Сăпка юрри

Музыки Юрий Кударовăн

Сăвви Анатолий Юманăн

Вăхăтлă, йăваш кăмăллăн




2.
ю - на - шар.
mf
riten.
3.А - çу - па - ла ан - нӳ - не ё - çӳ пул - тăр сан пар - не.
4.Çемь - е çа - вăр çи - тĕн - сен, - кĕт - ре - чĕ пур çут тĕн - чен.
1.
2.
Ă - су вĕç - тăр тӳ - пе - ре, тĕл пул ху пек чи - пе - ре. çăл-тăр - ла.
Сĕм - çĕр - ле е кăн - тăр - ла я - ту çун - тăр


mf
mp
a tempo
riten.
5.Çы-вăр, хĕ - рĕм, хал-лĕ - хе, пут ый - хă - ри
кан - лĕ - хе. Çи - тĕн, ма - лал-ла кар - маш,




1. Çывăр, хĕрĕм, çывăрах,
Ыйху тутлă пултăрах.
Çитĕн, малалла кармаш,
Сана кĕттĕр çут малаш.

2. Çитĕн, пепкем, ӳс патвар,
Сан йăху черченкĕ мар.
Пул хастар, хитре, вăр-вар,
Телей пытăр юнашар.

3. Аçупала аннӳне,
Ĕçӳ пултăр сан парне.
Ăсу вĕçтĕр тӳпере,
Тĕл пул ху пек чипере.

4. Çемье çавăр çитĕнсен,
-Кĕтречĕ пур çут тĕнчен.
Сĕм çĕрле е кăнтăрла,
Яту çунтăр çăлтăрла.

5. Çывăр, хĕрĕм, халлĕхе,
Пут ыйхăри канлĕхе.
Çитĕн, малалла кармаш,
Сана кĕттĕр çут малаш.

# Кив Улхаш

**Сăвви Анатолий Юманăн** **Музыки Юрий Кудаковăн**

Марш темпĕпе






Пирĕнпе юнашар Кив-Улхаш, -
Пурăнать кӳршĕре те чăваш.
Пурнăç çулĕ чĕнет малалла,
Улхаш витĕр малтан тухмалла.

***Хушса юрламалли:***

*Кив-Улхаш, Кив-Улхаш, Кив-Улхаш,-*
*Ăнтăлать малалла яш чăваш.*
*Сан ун витĕр малтан тухмалла,*
*Çитĕнсен малалла утмалла.*

Куршĕри хула евĕр яла,
Икĕ хутлă илемлĕ шкула
Шартлама сивĕре е çулла
Такăрларăмăр çывăх çула.

***Хушса юрламалли.***

Эсĕ пултăн пире тараватъ,
Çĕкленсе вĕçме патăн çунат.
Чĕрере — малтанхи юрату...
Малтанхи уйрăлу, ырату...

***Хушса юрламалли.***

Çил вĕрет, хăвалать хумсене,
Ĕлĕке хăварать кунсене.
Кун иртет, çутатса ырана,
Иртнине хăварса ялана.

***Хушса юрламалли.***

2007 ç.

---

* *Юлашки куплетра тепĕр хутчен юрламалла.*

# Çамрăк вăхăт, эс ăçта?..

**Музыки Юрий Кудаковăн** **Сăвви Анатолий Юманăн**

Васкамасăр, çепĕççĕн






ж) Вĕçĕнче темĕр хут юрламалла.

Çиле майăн ылтăн çулçăсем вĕçеççĕ.
Иртнĕ çамрăк вăхăта ас илтереççĕ.
Епле ырăччĕ, тӳлекчĕ çурхи каçĕ –
Çепĕç туйăмсем çаплах асран каймаççĕ.

Пахчара  чечек саратчĕ шурă çĕмĕрт.
Малалла чуна чĕнетчĕ сутă ĕмĕт.
Ăшă çил çӳçе шăлатчĕ, ачашлатчĕ,
Сарă хĕр кусран пăхатчĕ, йăлл! кулатчĕ.

Ешĕл тумлă чăлтăр! çамрăк вăхăт иртрĕ.
Арлă-арăмлă çу кунĕ килсе çитрĕ.
Çулçă ӳкнĕ евĕр, ачасем саланчĕç,
Çырă çӳçĕм шухăшпа кĕç улаланчĕ.

Çамрăк вăхăт, эс ăçта кайса çухалтăн?..
Эп сана аса илсе чунтан хурлантăм.
Çиле майăн ылтăн çулçăсем вĕçеççĕ,
Иртнĕ çамрăк вăхăта ас илтереççĕ.





**«Сăпка юррине» малтан хут юрлакан̆ Геннадий Никифоров.**



**Чăваш Республикин халăх артисчĕсем**
**Зоя Лисицинăпа Тамара Гурьева, баянпа Юрий Кудаков.**

Анатолий Юман

(Анатолий Фёдорович Ермилов)

**Виçĕ юрă**

**Три песни**

На чувашском языке

В авторской редакции

Компьютерный набор и верстка – В. А. Ефимова

Подписано в печать 24.04.2014 г.

Формат 60x84$^{1}/_{16}$. Бумага офсетная.

Гарнитура Тип Таймс. Печать ризографическая.

Усл. печ. л. 1,86. Тираж 150 экз. Заказ № 14/143.

Отпечатано с макета заказчика

в типографии ООО «Вектор-С»

432013, г. Ульяновск, ул. Промышленная, 53 Б

25.0